# Геннадий ЮМАРТ:
# «СӐВӐҪ ӖҪӖ - СӐВАПЛӐ»

Ҫыракан ҫыншӑн литература еннелле ӑнтӑлса пуснӑ пӗрремӗш утӑм, пӗрремӗш кӗнеке, хут-кӑранташа яланлӑхах айккинелле персе ярас тенӗ чухне ӗҫтешӗн шанчӑклӑ, пулӑшма тӑсса панӑ кӑмӑллӑ алли яланлӑх асра юлать.

Пӗрремӗш утӑм тенӗрен...

«Икӗ хурӑнташ пичче пурччӗ, – аса илет паянхи кун та Геннадий Юмарт, – питӗ вулама юрататчӗҫ, хитре ӳкеретчӗҫ, сӑвӑсем те ҫыратчӗҫ. Вӗсем хавхалантарни уҫрӗ те пулӗ чуна: сӑвӑсем ҫырма пуҫларӑм. Тӑваттӑмӗш класрах кӗрлевлӗ шывра пӑр кайнине сӑнаса, Мускав еннелле вӗҫекен самолетсен сассине тӑнласа малтанхи йӗркесем ҫуралчӗҫ... Кӗске вӑхӑтрах пӗр пӗчӗк блокнотлӑх сӑвӑ ҫырса хатӗрленӗччӗ. Ытларах чӗрчунсем, ҫутҫанталӑк ҫинчен ҫыраттӑм-ха ӗнтӗ. Куҫару ӗҫӗ те самаях илӗртме пуҫланӑччӗ, Р.Гамзатов тата ытти хӑш-пӗр авторсен сӑввисене чӑвашла куҫартӑм. Пӗр пек шухӑшлӑрах ачасемпе шкулта стена хаҫачӗ кӑларattӑмӑр, Ҫеҫпӗл Мишшинчен тӗслӗх илсе – «Сӑлтӑр» журнал. Аслӑрах классенче вара – райхаҫатпа та ҫыхӑнтӑм».

Геннадий Юмартӑн ку таранччен тунӑ ӗҫ-хӗлӗн шучӗ-вӗҫӗ те ҫук – пайтах. Вӑл – сӑвӑҫ, куҫаруҫӑ, тӗпчевҫӗ. Чӑвашла ултӑ сӑвӑ кӗнеки тухнӑ: «Тивӗҫ» (1969), «Курак тӑманӗ» (1971), «Керменкке» (1979), «Тӗрӗк» (1983), «Кӗмӗл алтӑр» (1988), «Мерекке» (1991), вырӑсла куҫарнисем иккӗ: «Друзья Нарспи» (1980), «Родное гнездо» (1987). Унӑн сӑввисем ҫавӑн пекех ытти халӑхсен чӗлхипе те пичетленнӗ. Геннадий Федорович ҫырнисем хушшинче тӑван халӑх кун-ҫулӗпе йӑли-йӗрки ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсем, ярӑмсем, поэмӑсем, сӑвӑллӑ юмахсем тата ача-пӑча валли ҫырнисем палӑрса тӑраҫҫӗ. Сӑвӑҫ ытти халӑх поэзине те нумай куҫарать: вӑл тутар, удмурт, вырӑс, белорус, пӑлхар, латыш, литвин, поляк, нимӗҫ, швед, акӑлчан поэчӗсене куҫарнӑ, Кавказ, Вӑтам Ази, Китайпа Япони сӑвӑҫӗсене те куҫарса пичетленӗ. Ҫав шутра ача-пӑча поэзийӗн тӗслӗхӗсем те самай.

Нумай ҫул хушши тӗпчевҫӗ пулса ӗҫленӗ май Юмарт чӑваш литературин классикӗсен ҫырнисен пуххисене, совет тапхӑрӗчченхи литература хрестоматине, чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗн ултӑ томлӑ пуххине кӑларма хутшӑннӑ, фольклор пуххине кӑларма вӑй хунӑшӑн ӑна Чӑваш патшалӑх премине панӑ. Чӑваш поэзийӗ, куҫару ӗҫӗн ӑсталӑхӗ, фольклор, литература ҫыхӑнӑвӗсем – ҫак темӑсем унӑн тӗпчевӗсенче тӗп вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Унӑн тӗпчевӗсем ӑслӑлӑх кӑларӑмӗсенче чылаӑ пичетленнӗ. Юмарт ҫавӑн пекех ҫав ыйтусене ҫутатса кулленхи пичетре тӑтӑшах ҫырать. Халӗ вӑл чӑвашсен аслашшӗсен YII-XYIII ӗмӗрсенчи сӑмахлӑхне (фольклорпа ҫырулӑх палӑкӗсене) пухать, тӗпчет хрестомати хатӗрлет. Вӑл ҫавӑн пекех халӑх эпосӗн материалӗсене малалла пухать, тишкерет. Юмарт вӗренӳ кӗнекисем хатӗрлес ӗҫе те кӑмӑлпа туса пырать: вӑл пуҫламӑш шкулсенчи килти вулав кӗнекине хатӗрлеме хутшӑннӑ, ача пахчисем валли хрестомати хатӗрлес ӗҫе те вӑй хунӑ. Г.Айхи итальянла, венгрла, акӑлчанла тата французла кӑларнӑ «Чӑваш антологине» хатӗрлеме пулӑшнӑ.

«Ҫырас-ӗҫлес ӗмӗтсем пысӑк-ха, – калаҫать ахаль те ытла сӑпайлӑ, ӗҫ тӗлӗшӗнчен тирпейлӗ Геннадий Федорович. – Историри хӑш-пӗр паллӑ ҫынсем ҫинчен унччен те 50 яхӑн материал ҫырса хатӗрленӗччӗ. Сахалтарах пек. Халь ак, кӗнекелӗх хатӗрлесех ҫитересшӗн. Тӑван халӑх историйӗ, кун-ҫулӗ варӑм та пуян пулни чӑннипех те питӗ савӑнтарать мана. Ҫак туйӑмпах тата хамӑрӑн авалхи мӑнасаттесем, вӗсен пурнӑҫӗнчи паллӑ пулӑмсем, тапхӑрсемпе ӗҫӗсем ҫинчен ҫырасси манӑн хальхи тӗп ӗҫ».

Геннадий Юмарт ачасем валли питӗ нумай ҫырнӑ терӗмӗр. Унӑн халь тата тепӗр пысӑк тӗллев: вӑл ачасем валли «Ултиер улӑп» ятлӑ пӗчӗк пьесӑсен ярӑмне, сериалне, хатӗрлесшӗн. «Пилӗк пайне ҫырнӑха, – тет автор пусӑннӑ ӗҫе вӗҫлессе ҫирӗппӗнех шанса, – татах хушмалла, вун пилӗк паях ҫитересшӗн. Юлашки вӑхӑталла куҫ вӑйӗ чакса пыни чӑрмантарать ӗнтӗ... Ҫапах, пулӑшакансем ҫумрах. Тавах вӗсене».

«Геннадий Федорович, калӑр-ха, тархасшӑн, мӗн шутлатӑр Эсир ҫак куна поэзи пирки? Мӗн чӗнет, мӗн илӗртет Сире поэзире?» – тесе ыйтрӑм Геннадий Федоровичран пӗр калаҫу вӑхӑтӗнче.

«Сӑвӑҫ ӗҫӗ – саваплӑ... Хам ҫинчен, хамӑр ҫинчен, халӑх, ҫӗршыв ҫинчен тӗнчене пӗлтерме май парать, – терӗ Геннадий Юмарт пӗр иккӗленӳсӗр, – ҫавӑн хакне туйса илсе, кирлӗ ӗҫ вырӑнне хурса хаклатӑп та эп поэзине. Ҫак вӑй, туйӑм тӗртсе-туртса пырать. Вӑл ӗмӗр тӑршшӗпе те иртмерӗ, ӳссех пычӗ. Ку пирӗншӗн, сӑвӑҫсемшӗн, телей».

Г.Ф.Юмарта – Чӑваш Республики культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченне, Константин Иванов, Петӗр Хусанкай, Митта Ваҫлейӗпе Нестер Янкас ячӗллӗ премисен лауреатне 65 ҫул тултарнӑ ятпа, халиччен тунӑ ӗҫсемшӗн тав туса, ӗмӗтленнӗ, палӑртнӑ тӗллевсене пурнӑҫласа пыма ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Любовь МАРТЬЯНОВА.**